28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ДЕКАБРЬ
22
ШАМАТКУН
248 (6999) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

ВЫЛЬĂХ АПАТНЕ ТĔПЛĔН ШУТА ИЛМЕЛЛЕ ТАТА ПЕРЕКЕТЛĔ ТЫТКАЛАМАЛЛА

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тата мĕнпур выльăха сыхласа хăварас ĕçре хĕллехи вăхăтра выльăх апачĕ çителĕклĕ пулни пысăк вырăн йышăнать. Кăçал сивĕсем иртерех пуçланнине пула, выльăхсене витере усрамалли вăхăт вăрăмланать, выльăх апачĕ ытларах кирлĕ пулать. Çавăнпа та выльăх апатне тĕплĕн шута илес, ăна перекетлĕ тыткалас ĕç колхоз руководителĕсемпе фермăра ĕçлекенсен ответлă задачи пулса тăрать.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Колхозсенчи выльăхсене хĕл каçарма хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсене колхозсенче выльăх апатне мĕн чухлĕ хатĕрленине, вĕсене мĕнле сыхласа усранине тĕрĕслесе тухма хушрĕç. Çак постановление пурнăçласа пыракан нумай колхозсем, хĕл иртерех пуçланнине пăхмасăрах, выльăхсем валли ăшă та сутă суртйĕрсем хатĕрлерĕç, çителĕклĕ таран апат уйăрса хучĕç. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз выльăх валли çителĕклĕ таран хытă апатсем, тымарçимĕç, сĕрулми тата ытти япаласем те уйăрнă. Ферма сурчĕсенче кăмакасем, кухньăсем юсавлă, кирлĕ таран вут-шанкă хатĕрленĕ. Халĕ, сивĕ тăнă вăхăтра, выльăхсене, вăл шутра лашасене те, хытă апатпа пĕрлех сĕрулми пĕсерсе çитересçĕ. Фермăра ĕçлекенсем хăйсем пăхакан выльăхсене кашни кун мĕнле апат, мĕн чухлĕ çитермеллине лайăх пĕлеççĕ, апата типтерлĕ те перекетлĕ тыткалаççĕ. Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз та выльăхсем валли апат çителĕклĕ уйăрнă. Мĕнпур апатран 70 процентне ферма сывăхне илсе пырса, ферма заведующийĕн аллине акт сырса панă. Колхоз председателĕ Андреев юлташ выльăх апатне тĕрĕс расходланине тата перекетлĕ тыткаланине яланах тĕрĕслесе тăрать.

Тÿрех каламалла, выльăх валли апат уйăрас, ăна шута илсе перекетлĕ тыткалас тĕлĕшпе начар ĕçлекен колхозсем те республикăра нумай-ха. Шупашкар, Советски, Красноармейски, Кувакино, Комсомольски районсенче выльăх валли кирлĕ апата 35—50 процент таран кăна уйăрнă. Элĕк районĕнче мĕнле апат мĕн чухлĕ кирлине те шута илмен. Çак районсенчи хăшпĕр колхозсенче утă-улăм çителĕксĕррине те тупма пулать. Çав вăхăтрах выльăх апачĕ хатĕрлес, ăна типтерлĕ тыткалас ĕç çине çаврăнса пăхман тĕслĕхсем сахал мар. Советски районри Торай колхозĕнче комбайнпа çапнă тыррăн улăмне çак вăхăта çитсе те хиртен пухса кĕртмен. Сĕнтĕр районĕнчи «Первая борозда» колхозра иртнĕ çул выльăх апачĕ çитмен пирки выльăх-чĕрлĕх нумай вилсе пĕтнĕ. Кунта кăçал та выльăх апачĕшĕн тăрăшмаççĕ. Выльăхсем валли уйăрнă 1000 пăт ытла сĕрулмине шăнтса пĕтернĕ. Сĕрпÿ районĕнчи Янзакасси ял Советĕнчи «Политотделец» колхозра лаша витисен кантăкĕсенчен, стенасенчи шăтăксенчен çил вĕрет. Витере сивĕ, çавна пула утă-улăм икĕ хут ытларах пĕтет. Çак ял Советĕнчи «Канаш», «Красная Чувашия» колхозсенче те, выльăхсене хĕл каçарма кирлĕ пек хатĕрленменнине пула, выльăх апачĕ перекетсĕр расходланать.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем выльăх апатне мĕнле расходланине çирĕп тĕрĕслесе тăма тивĕç. Кашни колхозăн уйăхра мĕн чухлĕ тата мĕнле апат расходламаллине тĕплĕн шутласа тунă план пулмалла. Хытă апатсем çителĕксĕр колхозсенче выльăх айне улăм сарас вырăнне торф, пăчкă кĕрпи, йывăçăн вак турачĕсене тата ытти çавăн пек япаласем сармалла. Ыраш улăмне вутă вырăнне çунтарма чармалла. Выльăх апачĕн пахалăхĕ ăна выльăха париччен кирлĕ пек хатĕрленинчен килет, сăмахран: вакласа, пĕçерсе, тăварласа, йÿçĕтсе пани пысăк усăлли пуринишĕн те паллă. Ыраш, тулă, урпа улăмĕсене вĕтетсе, ытти сĕткенлĕ апатсемпе хутăштарса парассине йĕркелемелле. Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз иртнĕ çулсенче хытă апатсене пĕçерсе, тăварласа тата йÿçĕтсе панипе кăна выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарма пултарчĕ. Хытă апатсене вĕтетсе, сĕткенлĕ апатсемпе хутăштарса çитерессине организацилеме кашни колхозрах условисем çителĕклĕ. Чи лайăх утă-улăма пĕтĕ выльăхсем валли тата çураки вăхăтĕнче çитерме уйăрса хумалла, вăл апата нисти та расходламалла мар. Пирĕн колхозсем çуллахи вăхăтра витаминлă утă, вĕлтрен, армути, йывăç милĕкĕсем тата ытти апатсем те чылай хатĕрлерĕç. Çак паха апатсене сыснасене, çамрăк выльăхсене, кайăк-кĕшĕке çитерме уйăрмалла. Перекетлĕ тыткаланипе пĕрлех выльăхсене апатлантарнă çĕрте зоотехниксемпе ветеринарсем кăтартнине пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Выльăх-чĕрлĕх апатне лайăх сыхламалла. Ăна колхоз председателĕпе счетовод алă пуснă ордер тăрăх кăна памалла. Колхозсенчи ревизи комиссийĕсем, хуçалăхри ытти пурлăхсене тĕрĕсленипе пĕрлех, выльăх апатне тĕрĕс расходланине тата ăна мĕнле пăхса усранине яланах контроллесе тăмалла.

Кострома колхозникĕсемпе колхозницисем чĕнсе каланă хыççăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекенсем выльăхсене лайăх хĕл каçарассишĕн ăмăртăва тухрĕç. Пирĕн республикăри нумай колхозсем, çак ăмăртăва хутшăнса, обязательствăсем илчĕç. Çав обязательствăсене пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле.

Выльăх апачĕпе перекетлĕ тата пĕлсе усă курни выльăх-чĕрлĕхе йĕркеллĕ хĕл каçарма май парать. Выльăх апачĕ темĕн чухлĕ пулсан та, ăна шутсăр тата перекетсĕр çитерсен, вăл усăсăр пĕтни пуринишĕн те паллă. Çавăнпа та кашни колхозăн пур тĕрлĕ апата та шута илсе тунă выльăх апачĕн балансĕ пулмалла. Çак балансра кашни уйăхрах мĕн чухлĕ тата мĕнле апат расходламаллине пăхса хурас пулать. Ферма заведующийĕсем çав плана пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла.

Кăçал выльăх апачĕ енĕпе хăшпĕр колхозсенче чылай йывăрлăхсем пулма пултараççĕ. Çакă вара пур пек апата питĕ перекетлĕн тытма хушать, выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл хĕл каçарма кирлĕ таранах апат тупас тесе, пур майсемпе те усă курма хушать.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин ячĕпе тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин ячĕпе СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче пулса иртнĕ йышăну

Мускава килнĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин ячĕпе тата Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин ячĕпе декабрĕн 20-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче йышăну пулса иртнĕ.

Йышăнура çаксем пулнă: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Государство Секретарĕ Д. Бирнс господин, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Бевин господин, Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Яланхи Заместителĕ А. Калоган господин, Министрсен Канашлăвне килнĕ Америка делегацийĕн членĕсем—В. Коэн, Д. Конант, Х. Метьюз, Ч. Болен, Д. Картер Винсент господинсем, Х. Келли полковник, Министрсен Канашлăвне килнĕ Англи делегацийĕн членĕсем—Р. Буллард, Р. Кембелл господинсем, Я. Джейкоб генерал-майор, Д. Стерндейл Беннел, Д. Диксон, В. Хейтер, Д. Уорд господинсем,, Великобританин Совет Союзĕнчи Посольствин членĕсем вĕсене ертсе пыракан Посолпа А. Керр господинпа пĕрле, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Посольствин членĕсем вĕсене ертсе пыракан Посолпа А. Гарриман господинпа пĕрле, çавăн пекех тата Мускаври ытти посольствăсемпе миссисен пуçлăхĕсем.

Советсем енчен йышăнура çаксем пулнă: СССР Халăх Комиссарĕсем—флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, В. Н. Меркулов, И. В. Ковалев, Г. А. Митерев, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем — А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем А. Д. Крутиковпа М. С. Степанов, Совет Союзĕн Посолĕсем—С. И. Кавтарадзе, Ф. Т. Гусев, Г. Н. Зарубин, К. К. Родионов, Д. А. Жуков, ВЦСПС Председателĕ В. В. Кузнецов, СССР Наука академийĕн Президенчĕ С. И. Вавилов, Мускав Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, адмирал Л. М. Галлер, СССР Наркоминделĕн, Тулашри суту-илÿ Халăх Комиссариачĕн, СССР Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем, çавăн пекех тата совет общественноçĕн, совет пичечĕпе ют çĕршыв пичечĕн представителĕсем пулнă.

ПРОФСОЮЗСЕМПЕ КОМСОМОЛЕЦСЕН ЙĔЛТĔРЛĔ КРОСĔ

ВЦСПС секретариачĕпе ЦК ВЛКСМ 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе 15-мĕшĕ хушшинче профсоюзсемпе комсомолецсен йĕлтĕрлĕ кросне ирттерме йышăннă. Кросса йĕркелесе ертсе пыма организациллĕ комитет туса хунă. (ТАСС).

Красноармейски машинно-тракторнăй станцин коллективĕ Чăваш республикинчи МТС-сен тракторисчĕсене, комбайнерĕсене, механикĕсене, рабочийĕсемпе служащийĕсене пурне те ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

1945 çул совет халăхĕпе Хĕрлĕ Çар фашистла нимĕç захватчикĕсене тата Япони империалисчĕсене çĕнтерне историллĕ çулталăк пулчĕ. Халĕ совет халăхĕ умĕнче фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсем аркатнă халăх хуçалăхне çĕнĕрен юсаса ура çине тăратас, çĕршывăн экономикине тата ĕççыннисен пурнăçне хăвăртрах юсаса лайăхлатас пысăк задачăсем тăраççĕ.

1946 çулта — Сталинла тăваттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕнче—пирĕн ялхуçалăхĕ акăнакан çĕр лаптăкне малалла ÿстерме, тырпул тухăçлăхне ÿстерме тата ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне нумайлатма тивĕçлĕ. Çак пысăк задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре малта пыракан техникăпа хĕçпăшалланнă машинно-тракторнăй станцисем татăклă вырăн йышăнса тăмалла. МТС работникĕсен задачи—машинăсемпе тракторсен паркне вăхăтра тата лайăх хатĕрлесе çитересси, тракторсемпе комбайнсем тата ытти ялхуçалăх машинисем пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле тăвасси пулать.

1945 çулта пирĕн МТС коллективĕ начар мар ĕçлерĕ. Тракторпа ĕçлемелли çулталăкри плана эпир 125 процент тултартăмăр, 7.450 килограмм горючи перекетлесе хăвартăмăр. Уйрăмăн илсен, çураки ĕçĕсен планне 114 процент, комбайнпа тырă пухса кĕртмелли плана 124,7 процент, кĕрхи тырăсем акмалли плана 129 процент, кĕрхи çĕртме тумалли плана 100,3 процент тултартăмăр.

1946 çулта çĕнĕ çитĕнÿсем тăвассишĕн кĕрешсе, эпир тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене юсама вăхăтра тытăнтăмăр, IV-мĕш кварталта машинăсем юсамалли плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçа кĕртрĕмĕр. Машинăсем юсас ĕçре У. Н. Николаева юлташ бригади лайăх ĕçлерĕ, вăл тракторсене тата комбайнпа ялхуçалăх машинисене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ, çавăн пекех Ивановăпа Егоров юлташсен бригадисем те хăйсен тракторĕсене 1946 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтереççĕ.

Килес çулхи уйхир ĕçĕсене лайăхрах хатĕрленсе çитес шутпа, Краснодар крайĕнчи Старо-Мышастовски МТС коллективĕн пуçарăвне йышăнса, эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра юсамалли плана 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне—СССР Верховный Советне суйламалли кун тĕлне—«лайăх» тата «отлично» паллăсемпе пурнăçа кĕртмелле.
2. МТС комбайнĕсемпе молотилкисене 1946 çулхи майăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр хатĕрлесе çитермелле.
3. МТС мастерскойĕн вăйĕпе 14.000 тенкĕлĕх запаслă пайсем юсаса хатĕрлемелле тата çĕнĕрен тумалла.
4. Тракторсене, комбайнсене, ялхуçалăх машинисене хĕллехи вăхăтра кăтартуллăн сыхласа усрамалла, вĕсене лупасайĕсене, сарайсене лартса, кăтартса панă правилăсем тăрăх сыхласа усрамалла.
5. Колхозсем пулăшнипе çураки тĕлне кашни бригада валлиех нефть усрамалли хранилищĕсем, хирти вагонсем туса хатĕрлемелле.
6. Нефть тытса усрамалли катка-пичкесене тата заправка тумалли инвентарьсене пурне те юсаса хатĕрлемелле, трактор бригадисене пурне те заправка тумалли инвентарьсемпе инструментсем çителĕклĕ чухлех тупса памалла.
7. Техникăллă вĕренĕве тăтăшах йĕркелесе пырса, трактористсемпе комбайнерсен тата бригадирсен квалификацине ÿстермелле.
8. Лашапа ĕçлемелли инвентарьсене—плугсене, сеялкăсене тата ытти машинăсене пурне те вăхăтра юсаса хатĕрлес ĕçре колхозсене пулăшмалла.
9. МТС рабочийĕсемпе служащийĕсен культурăпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшмалла, хĕрлĕ кĕтес уçса, ăна йĕркеллĕн тытса усрамалла, ăна культурăллă-массăллă ĕçĕн яланхи вырăнĕ туса хумалла, МТС рабочийĕсене вĕри апат çитерессине йĕркелемелле, столовăйпа общежитие культурăллă тытса усрамалла.

Эпир Чăваш республикинчи МТС-сен тата ремонт завочĕн мĕнпур тракторисчĕсене, комбайнерĕсене, рабочийĕсемпе служащийĕсене кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсамалли плана срокчен тултарассишĕн пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнма, çапла вара СССР Верховный Совечĕн суйлавне производствăра çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе кĕтсе илме чĕнетпĕр.

Юлташсем—МТС-семпе ремонт завочĕн работникĕсем! Вăйя шеллемесĕр ĕçлесе, машинăсемпе тракторсен паркне уйхирте ĕçлеме вăхăтра хатĕрлесе çитерер, колхозсемпе совхозсене вăйлă тырпул ÿстерсе илме пулăшар, хамăрăн çĕршыва татах та хăватлăрах, татах та пуянрах тăвар, çапла вара эпир Тăван çĕршыва, большевиксен партине, Аслă Сталина чĕререн парăнса тăнине кăтартса парар!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерÿсене хавхалантарса пыраканĕ тата организацилекенĕ—Ленинпа Сталин партийĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ!

Красноармейски МТС тракторисчĕсен, трактористкисен, комбайнерĕсен, рабочийĕсемпе служащийĕсен пухăвĕнче йышăннă.

Пĕрлешÿллĕ пуху хушнипе çаксем алă пуснă:

МТС директорĕ КОНСТАНТИНОВ, парторганизаци секретарĕн заместителĕ НИКОЛАЕВА, рабочком председателĕ ПАВЛОВ, старши механик АФАНАСЬЕВ, комсомол организацин секретарĕ СТЕПАНОВ, мастерской заведующийĕ ПАВЛОВ, ялхуçалăх машинисен механикĕ АНИСОВ, токарь ИЛЛАРИОНОВ, тимĕрçĕ ЕГОРОВ; юсав бригадисен бригадирĕсем НИКОЛАЕВА, ИВАНОВА, ЕГОРОВ; трактористсем: ИВАНОВ, ТИТОВ, АНИСИМОВ, НИКОЛАЕВ; комбайнерсем: МЕФОДЬЕВ, ГАВРИЛОВ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн сессийĕ

Декабрĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарти Пионерсен çуртĕнче ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн 33-мĕш сессийĕ пулса иртрĕ.

Сесси ларăвне ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ П. И. Аникин юлташ уçать. Сесси, пĕр саслă пулса, лару председателĕ пулма Ф. С. Моргунов депутата, секретарĕ пулма К. А. Арзамасцева депутата суйласа лартать.

Сессин кун йĕркинче пĕр ыйту: СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленесси тата умра тăракан задачăсем.

Ку ыйтупа ларура ĕççынни депутачĕсен хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ И. И. Аникин юлташ доклад туса парать.

— Çитес суйлав,—тет Аникин юлташ,—Отечественнăй вăрçă эпир çĕнтернипе вĕçленнĕ хыççăн пулса иртет. Пирĕн халăх çитес суйлава пысăк хастарлăхпа кĕтсе илет. Çĕршыври миллионшар ĕççыннисем Сталинла Конституцие тата Суйлав Законне вĕренеççĕ. Чи лайăх çынсене халăх суйлав комиссисен составне уйăрса лартрĕ. Аслă Сталин ертсе пыракан совет халăхĕ, СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май, умра тăракан задачăсене пурнăçлассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлет.

Пирĕн хулара, тет Аникин юлташ малалла, 26.000 суйлавçă шутланать. Вăл шутра пирвайхи хут суйлава хутшăнакан 4.000 çамрăк. Иртнĕ суйлавра Шупашкарта 17 суйлав участокĕ пулнă пулсан, хальхи вăхăтра 22 суйлав участокĕ туса хунă. Суйлав списокĕсене туса хатĕрлес енĕпе 150 çынна яхăн ĕçленĕ, вĕсем суйлавçăсене килĕрен çÿресе çырса тухнă.

Участокри суйлав комиссийĕсен составне хулари рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин чи лайăх представителĕсене çирĕплетнĕ. Суйлав участокĕсен çурчĕсене йĕркелеме пирĕн 102 хупă кабина тумалла, кашни кабинăрах пĕрер сĕтел пулмалла. Кабинăсене тума «Кооператор» артеле патăмăр, суйлав урнисем киввисемех пур, вĕсене тепĕр хут сăрласа çеç тухмалла пулать.

Хăшпĕр суйлав участокĕсене йĕркелесе илемлетес ĕçе тытăннă та ĕнте. Сăмахран, 6-мĕш суйлав участокне лайăх йĕркеленĕ, агитпункт организациленĕ, ятарласа выставка тунă.

Анчах та, тет Аникин юлташ, суйлава хатĕрленес ĕç хулара çителĕклĕ пулса пырать тесе калама çук-ха. Уйрăм предприятисемпе учреждениесен руководителĕсем (пир-авар фабрики, Наркомфин) суйлав участокĕсене пулăшас ĕçрен пăрăнса юлма хăтланаççĕ. «Росглаввино» тресчĕ суйлав участокне йĕркелеме хула Советĕнчен материалсем ыйтса ларать.

Малалла Аникин юлташ хулара суйлавçăсен списокĕсене тăвас, суйлава хатĕрленнĕ май ĕççыннисен пурнăçĕпе йăла условийĕсене лайăхлатас, хулари предприятисемпе артельсенче куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларас, коммунальнăй предприятисен ĕçне лайăхлатас ыйтусем çинче чарăнса тăрать.

Уйрăмăнах Аникин юлташ хулари пекарня ĕçĕ çинче чарăнса тăрать.

— Декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче, — тет вăл,—хула халăхне çăкăр парса тăрас ĕçре çитменлĕхсем пулчĕç. Ку ĕç пĕтĕмпех çăкăр комбиначĕ япăх ĕçленинчен килнĕ. Комбинат директорĕ пулса ĕçленĕ Лучников ĕçе япăхтарса янă, çăкăр пĕçерме çителĕклĕ вутă хатĕрлемен. Халĕ ăна ĕçрен кăларса ответ тыттармалла тунă, хула халăхĕ валли çителĕклĕ таран çăкăр пĕçерме пуçланă. Анчах çакна та каласа хăварас пулать: сутуилÿ организацийĕсем çаврăнăçусăр пулнипе, ларексемпе магазинсем çăкăра комбинатран пĕтĕмпе илмесĕр хăвараççĕ.

Докладчик суйлава хатĕрленнĕ май хулари çитменлĕхсене пурне те пĕтерме кирли çинчен калать.

Доклад тăрăх пуçланнă прениссенче чи малтан Егоров депутат сăмах илет. Хăйĕн сăмахĕнче вăл суйлавçăсен списокĕсене туса хатĕрлес ыйту çинче чарăнса тăрать.

— Списоксем тăвас майпа манăн суйлавçăсем патне çÿремелле пулчĕ,—тет вăл.—Почта çуртне хирĕç шыв будкинче пурăнакансем суйлав хăçан пулассине пĕлмеççĕ. Суйлав хăçан пуласси çинчен повестка пулĕ-ха, тесе шутлаççĕ вĕсем.

Черпакова депутат та çавăн пекех суйлавçăсен списокĕсене тăвас ыйту çинче чарăнса тăчĕ.

Гособеспечени отделĕн заведующийĕ Тарасова юлташ Сосновкăри поселок Совечĕ суйлава хатĕрленес тĕлĕшпе япăх ĕçлени çинчен чарăнса тăрать. Атăл леш енчи суйлав участокĕсен çурчĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Сосновкăри поселок Совечĕн председателĕ Владимиров юлташ списоксем туса хатĕрлеме çынсем уйăрас ĕç çине çиелтен кăна пăхнă. Хăшпĕр çĕрте суйлав списокне арăмне кĕртнĕ, упăшкине кĕртмен, уйрăм çынсен хушамачĕсене пăсса çырнă.

Чебторг директорĕ Антонов суйлава хатĕрленнĕ май хулари суту-илÿ организацийĕсен ĕçне лайăхлатма кирли çинчен калать. Манăн шутпа, тет вăл, пирĕн хулара çăкăр сутакан дежурнăй (каçхи) магазин уçмалла. Академи театрĕн директорĕ Мордкович юлташ электричество çути çук пирки культпросвет учрежденийĕсем ĕçлеме пултарайманни çинчен калать.

ВКП(б) хула горкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ çитес суйлав мĕн тери паллă вырăн йышăнни çинчен чарăнса тăрать.

— Пирĕн суйлавсем,—тет вăл,—ытти çĕршывсенчи суйлавсенчен тĕпренех уйăрăлса тăраççĕ, мĕншĕн тесен пирĕн чи демократиллĕ суйлавсем пулаççĕ. Суйлава хатĕрленнĕ май пирĕн хамăр ĕçе пĕтĕçтерсе пăхса тухмалла. Ĕççыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатас ыйтусене сивĕччĕн лартмалла, ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерсе пымалла.

СССР Верховный Совет суйлавĕнче эпир, иртнĕ суйлавсенчи пекех, коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлатпăр. Хулари коммунистсем ку суйлавра та партире тăманнисем тăратнă кандидатсемшĕн сасăлаççĕ, партире тăманнисене вара эпир коммунистсем тăратнă кандидатсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. И. Измайлов юлташ суйлав участокĕсене йĕркелес, суйлавçăсен списокĕсене тăвас ыйту çинче чарăнса тăрать. Хулари 7-мĕш участокра суйлав комисси пÿлĕмне йĕркелемен. Сосновкăри поселок Совечĕн секретарĕ февралĕн 10-мĕшĕнче кашни суйлавçă миçе бюллетень илесси çинчен те пĕлмест.

Пренире çавăн пекех Ковалева (хула Совечĕн исполкомĕ), Верещагин (2-мĕш номер шкул), Плетнев (ялхуçалăх институчĕ), Васильева депутатсем тухса калаçрĕç.

Сÿтсе-явнă ыйтупа хула Совечĕн сессийĕ ятарласа решени йышăнчĕ. Вăл решенире суйлава хатĕрленнĕ май хула Совечĕн пĕтĕм ĕçне лайăхлатма кирли çинчен, агитациллĕ-массăллă ĕçе тивĕçлипе организацилемелли çинчен, суйлав кунне çĕнĕ çитĕнÿсем туса кĕтсе илес тĕлĕшпе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме кирли çинчен каланă.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРА ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 20-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Плана миçе процент тултарнă
1. Чурачăк	113,1
2. Красноармейски	112,5
3. Вăрнар	110,1
4. Советски	109,6
5. Етĕрне	109,5
6. Муркаш	109,1
7. Сĕнтĕр	108,8
8. Шупашкар	108,1
9. Калинино	107,6
10. Элĕк	107,5
11. Ишлей	105,9
12. Шăхасан	105,9
13. Октябрьски	105,8
14. Çĕрпÿ	104,3
15. Сĕнтĕрвăрри	104,2
16. Пăрачкав	100,7
17. Елчĕк	100,0
18. Вăрмар	98,5
19. Канаш	92,9
20. Хĕрлĕ Чутай	92,9
21. Куславкка	92,1
22. Йĕпреç	90,7
23. Комсомольски	87,5
24. Сĕмĕрле	85,7
25. Первомайски	85,0
26. Улатăр	83,0
27. Тăвай	79,5
28. Чкаловски	77,7
29. Шăмăршă	60,8
30. Кувакино	55,0

Районри парти активĕн пухăвĕ

ÇĔРПУ. Районри парти активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура «СССР Верховный Совет суйлавне хатĕрленнĕ май партин районри организацийĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен» ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Д. Я. Митьков юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик районри парти организацийĕ суйлава хатĕрленсе чылай пысăк ĕçсем тунине палăртрĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тухнăранпа агитаципе пропаганда ĕçĕ нумай вăйланнă. Суйлав участокĕсем организациленĕ, участоксенчи комиссисен составне çирĕплетнĕ. Кашни суйлав участокĕнчех агитпунктсем организациленĕ, вĕсенче 620 агитатор ĕçлет.

Анчах партин районри организацийĕн суйлава хатĕрленес енĕпе тумалли ĕçсем нумай-ха.

Çак кунсенчех суйлавçăсен списокĕсене туса çитерсе, тĕплĕн тĕрĕслесе тухмалла. Нумай ял Советĕсенче суйлавçăсен хушамачĕсене списокра пăсса çырнисем, хăш çулта çуралнине лартмасăр хăварнисем тата алфавит йĕркине пăхăнманнисем пур. Хăшпĕр çĕрте суйлав прависĕр хăварнă çынсене суйлавçăсен списокне кĕртнисем те пур (Тĕнсĕр, Кăшаркасси ял Советĕсем). Çĕрпÿ хула Советĕпе Уйкас ял Советĕ суйлавçăсен списокне тума тин тытăннă.

Суйлавçăсен списокне тĕрĕс çырасси—пысăк та ответлă ĕç. Ку тĕлĕшпе ял Совечĕсене партин пуçламăш организацийĕсен тивĕçлĕ пулăшу памалла.

Партин хăшпĕр пуçламăш организацийĕсем: суйлав часах мар-ха, тесе лăпланса лараççĕ. Тивĕш ял Советĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозра ку таранччен пĕр агитатор та ĕçлемест, колхозниксене суйлав çинчен пухура та ăнлантарса паман. Тавăшкасси ял Советĕнче те Положение вĕренесси япăх пырать.

Суйлав умĕнхи агитаципе пропаганда ĕçĕнче культура учрежденийĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Анчах та Хыркасси, Елаш ял Совечĕсенчи вулав çурчĕсем халĕ те хупăнсах лараççĕ. Икĕ кинопередвижкăран пĕри çеç ялсенче çÿрет.

Пренире 10 коммунист тухса калаçрĕç. Партин МТС-ри организацин секретарĕ Абрикосова юлташ Çĕрпÿ МТС-ĕн коллективĕ Краснодар крайĕнчи Старо-Мышастовски МТС коллективĕ чĕнсе каланине сÿтсе-явни тата машинăпа тракторсен паркне СССР Верховный Советне суйламалли кунччен пĕтĕмĕшпех юсаса пĕтерме обязательство илни çинчен пĕлтерчĕ. Кăшаркасси ял Совечĕн председателĕ Ефимов юлташ фронтра вилнĕ воинсен ачисене пулăшас ĕçе вăйлатасси çинчен каларĕ. Вăл ял Советĕнчи колхозсен вăйĕпе Çĕрпÿри ачасен çуртне хĕл каçма çителĕклĕ вутă турттарса пама пулчĕ.

Пуху тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

П. ПАВЛОВ.

А. Н. ОСТРОВСКИЙ — ЧĂВАШ СЦЕНИ ÇИНЧЕ

Чăвашсен академи театрĕнче вырăссен чаплă драматургĕ А. Н. Островский çырнă «Мĕн шырама каятăн—çавна тупса килетĕн» ятлă комедине лартма хатĕрленеççĕ. Чăвашла ăна Леонид Агаков куçарнă. Спектакле театрăн художествăллă руководителĕ Л. Н. Родионов лартать. Пьесăри тĕп роле—Бальзаминова—РСФСР тава тивĕçлĕ артисчĕ тата Чăваш АССР-ĕн халăх артисчĕ Б. А. Алексеев вылять. Премьера декабрĕн 15-мĕш кунĕнче пулмалла.

СССР КОНСТИТУЦИЙĔ ÇИНЧЕН КАЛАÇУСЕМ

ССР Союзĕн государство тытăмлăхĕ

Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 240-мĕш номерĕнче.

СОЮЗЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕМ ЧЕЧЕКЛЕННИ

Кирек хăш союзлă республикăна илсен те, вĕсенчен кашниех хăйсен экономикăпа культура тĕлĕшĕнчи пурнăçне чечеклентерес тĕлĕшпе калама çук пысăк çитĕнӳсем турĕç.

Акă, сăмахран, союзлă Узбекистан республикине илер. Патша вăхăтĕнче кунта халăх пĕтĕмпе тенĕ пекех хут пĕлмен. Çутçанталăк пуянлăхĕсем çаплипех пĕр хускалмасăр выртнă. Ку çĕршыв—патша империйĕнчи кая юлнă пускăрлăхра тертленсе пурăнакан окраина пулнă. Патша влаçне хирĕç узбек халăхĕ темиçе хутчен те çĕкленсе восстани тунă.

Совет влаçне пула Узбексен Советлă Социализмлă Республикинче вăйлă çĕркăмрăк промышленноçĕ, нефть промышленноçĕ, машинăсем тăвакан промышленность туса хунă, унта халĕ хура тата тĕслĕ металлурги аталанса пырать. Хресченсем колхозсене пĕрлешнĕ тата ялхуçалăхне малта пыракан машина техникине кĕртнĕ хыççăн, Узбекистанри çĕрĕçĕ çĕрмамăкĕ, рис, пурçăн тăвас тĕлĕшпе ССР Союзĕнче чи малти вырăна тухрĕ. Кунта уй-хире шăвармалли каналсем те чылай тунă тата киввисене лайăхлатнă. Тĕслĕхрен, Узбекистанри мĕнпур колхозниксем пухăнса ĕçлесе 270 километр тăршшĕ Аслă Фергана каналне туса хунă. Нумай электростанцисем туса лартнă.

Культура тĕлĕшĕпе те кунта чылай пысăк çитĕнӳсем тунă. Вăрçă умĕн Совет Узбекистанĕнче 4500 шкул пулнă. Кунсăр пуçне, кунта халĕ 110 техникум, 29 аслă шкул, Наука академийĕ, Государство консерваторийĕ, 60 театр пур, 208 хаçат тухса тăрать, узбекла çĕршер пин кĕнеке кăларассĕ. Узбексен паци литературы, музыки, живописĕ, скульптури аталанса чечекленчĕç.

СОЮЗЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СУВЕРЕННĂЙ ПРАВИСЕМ

Союзлă республикăсен государство тытăмлăхĕ мĕнле-ши?

Кирек хăш союзлă республикăна та совет халăхĕ хăйĕн ирĕкĕпе тунă. Вăл çав республикăна тунă халăхăн ятне илнĕ. Союзлă кашни республика вăл **рабочисемпе хресченсен советлă социализмлă наци государстви** пулса тăрать. **Союзлă республика вăл вара хăйĕн ирĕкĕпе Совет Союзĕн составне ытти союзлă республикăсемпе пĕртан правапа кĕрет.**

Пĕрлĕхлĕ союзлă государствăн членĕ пулса та, кашни союзлă **республика хăйĕн суверреннăй** прависене, урăхла каласан, **государствăн чи аслă прависене** сыхласа хăварать. Вăл хăйĕн территорийĕнчи государство влаçне пур ыйтусем тĕлĕшпе те хăйĕн ирĕкĕпе туса пырать. Хăшпĕр ыйтусене татса парассине кăна союзлă республикăсем Пĕтĕм Союзри государство влаçĕпе государство управленийĕн органĕсен аллине хăйсен ирĕкĕпе панă. Çав ыйтусене вара союзлă республика хăй тĕллĕн татса пама пултараймасть. Çакăнпа пĕрлех кашни союзлă республика,—ăна кирек мĕнле халăх тунă пулин те, унта темĕн чухлĕ халăх пурăнать пулин те тата унăн территорийĕ темĕн тери пысăк пулин те,—СССР государство влаçĕн чи аслă органĕнче хăйсен представителĕсене тытать. Çав представительсем ĕнтĕ республикăсенчи гражданĕсем СССР Верховный Совечĕн Национальноçсен Советне суйласа яракан 25 депутат пулать. Çапла ĕнтĕ, кашни союзлă республика Совет Союзĕнчи государство влаçĕн чи аслă органĕнчи хăйĕн представителĕсем урлă хăйсен уйрăм интересĕсене, нацин расналăхĕпе сыхăнса тăракан интересĕсене калаçа пама пултарать.

СОЮЗЛĂ РЕСПУБЛИКĂН СОЮЗРАН ХĂЙĔН ИРĔКĔПЕ ТУХМАЛЛИ ПРАВИ

Союзлă республикăн мĕнле суверреннăй прависем пур-ха?

Союзлă республикăн, чи малтанах, хăйĕн ирĕкĕпе Союзран тухмалли право пур. Малтанлăха пăхсан, Совет Конституцийĕнче ССР Союзĕнчен хăйсен ирĕкĕпе тухасси çинчен калакан статья кирлĕ те мар пек туйăнать. Пирĕн пĕр союзлă республика та Совет Союзĕнчен тухма хатĕрленмест те, шутламасть те. Совет çĕршывĕнчи пур халăхсем те хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ, вĕсем хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен малалла аталанса пырасси чи малтанах тата пуринчен ытларах ССР Союзĕн вăй-хăвачĕпе çирĕплĕхĕнчен килнине питĕ лайăх пĕлеççĕ. СССР Конституцийĕн проектне сӳтсе явнă чухне хăшпĕрисем Союзран хăйсен ирĕкĕпе тухмалли право çинчен калакан статьяпа, вăл ытлашши статья тесе, кăларса пăрахма сĕнчĕç. Сталин юлташ вара кун пек туни тĕрĕс мар, тесе кăтартса пачĕ. Пĕр союзлă республика та Союзран тухма хатĕрленмест. Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Анчах та кашни союзлă республикăна Союзран тухма ирĕк пани союзлă республикăсем Союза чăннипех хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнине питĕ усăмлăн кăтартса парать.

Союзлă республикăсене Союзран тухма ирĕк пани ĕнтĕ вĕсене чи аслă суверреннăй правассене пани пулать.

РЕСПУБЛИКĂН КОНСТИТУЦИЙĔ, ЗАКОНĔСЕМ, ТЕРРИТОРИЙĔ ТАТА ГОСУДАРСТВĂН АСЛĂ ОРГАНĔСЕМ

Союзлă республикăн хăйĕн Конституцийĕ пур. Ăна республикăри государствăн аслă влаçĕ çирĕплетме тата улăштарма пултарать. Çав Конституцире çĕршывăн наци, хуçалăх, культурăпа йăла тата ытти тĕлĕшĕнчи уйрăмлăхĕсене кăтартса панă. Анчах та кашни союзлă республикăн Конституцине ССР Союзĕн Конституцийĕпе тĕпренех килĕштерсе тунă. Ку паллă ĕнтĕ: союзлă республика вăл—Совет Союзĕн членĕ, экономикăпа политика тĕлĕшĕнчи никĕсĕ унăн пур союзлă республикăсеннипе **пĕрех.**

Союзлă республикăсен **хăйсен республикисенчи законĕсем** пур, вĕсене республикăри государствăн аслă влаçĕ кăларать. Çав законсем çав республика территорийĕнче обязательнăй пулаççĕ. Республикăсенче республика пурнăçĕнчи пур ыйтусем тĕлĕшпе те законсем кăлараççĕ. Анчах та республикăсем Пĕтĕм Союза тивекен ыйтусем тĕлĕшпе законсем кăлараймаççĕ. Кун пек законсене ССР Союзĕн государство аслă влаçĕ кăларать. Çакăн пек законсен шутне, сăмахран, вăрçăпа мир ыйтăвĕсем, СССР составне çĕнĕ республикăсене илес ыйту, ССР Союзĕн пĕрлĕхлĕ государство бюджетне çирĕплетес ыйту тата ыттисем те кĕреççĕ. Хăшпĕр ыйту тĕлĕшпе, сăмахран, çĕрпе усă курассин, сывлăх ĕçĕн, çутĕçĕн никĕсĕсем çинчен йышăннă Пĕтĕм Союзри законсем республикăсенче те çав ыйтусем тĕлĕшпех законсем кăларассине нимĕн чухлĕ те кансĕрлемеççĕ: республикăсенче кăларнă законсем Пĕтĕм Союзри законсене хушса хурса малалла аталантараççĕ çеç.

Çапла ĕнтĕ, союзлă республикăсене хăйсен пурнăçĕн ыйтăвĕсем тĕлĕшпе законсем кăларассине нимĕн те чарса тăмасть.

Союзлă республика Союза кĕрсен те **хăйĕн территорине тытса тăмалли правана** сухатмасть. Союзлă республика килĕшмесен, унăн территорине улăштарма юрамасть.

Союзлă республикăн государство влаçĕн тата государство управленийĕн аслă органĕсем пур. Çав органсем шутне союзлă республикăн Верховный Совечĕ, Верховный Советăн Президиумĕ, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ (правительство) кĕреççĕ.

СОЮЗЛĂ РЕСПУБЛИКĂН ÇАР ЧАÇĔСЕМ. УНĂН ЮТ ÇĔРШЫВСЕМПЕ СЫХĂНУ ТЫТАС ТĔЛĔШРИ ПОЛНОМОЧИЙĔСЕМ

СССР Конституцийĕ тăрăх, кашни союзлă республикăн **хăйĕн республикинчи çар формированийĕсем** (çар чаçĕсем) пур. Вĕсем СССР Союзĕн Хĕрлĕ Çар составне кĕреççĕ. Республикăсенчи çар чаçĕсене организацилес йĕркене союзлă республика хăй татса парать. Пĕтĕм Союзри власть вара союзлă республикăсенчи çар чаçĕсене организацилемелли никĕссене çеç кăтартса парать. Государство влаçĕн Пĕтĕм Союзри органĕсем СССР оборонине организацилес ĕçе тата Совет Союзĕнчи мĕнпур хĕçпăшаллă вăйсене ертсе пыраççĕ. Республикăсенче çар чаçĕсем организацилени Хĕрлĕ Çарăн вăй-хăватне татах та ытларах тĕреклетет.

Союзлă республикăсен **ют çĕршывсемпе тӳррĕнех сыхăну тытса тăмалли право** пур. Вĕсем ют çĕршывсемпе килĕшӳсем тума, пĕр-пĕрин патне дипломати представителĕсемпе консулсем яма пултараççĕ. Республика хăш государствăпа тӳррĕнех сыхăну тытассине хăех татса парать. Пĕтĕм Союзри власть вара союзлă республикăсен ют çĕршывсемпе сыхăну тытмалли пĕтĕмĕшле йĕркине палăртса хурать тата ку ĕçе пĕтĕмĕшлĕн ертсе пырать. Государство влаçĕн Пĕтĕм Союзри органĕсем ют çĕршывсемпе пĕтĕм Совет Союзĕ ячĕпе сыхăну тытаççĕ, вĕсемпе СССР ячĕпе договорсем тăваççĕ. Союзлă республикăсем ют çĕршывсемпе сыхăну тытни пирĕн пĕтĕм тĕнчери сыхăнусене тата ытларах тĕреклетет, мир интересĕшĕн, Совет Союзне хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен аталантарассишĕн совет халăхĕсем ытти халăхсемпе килĕштерсе пурăнассине вăйлăлатать.

Союзлă республикăсенче çар формированийĕсем тăвасси çинчен тата союзлă республикăсем ют çĕршывсемпе сыхăну тытасси çинчен СССР Верховный Совечĕ 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнче йышăннă законсем союзлă республикăсен суверреннăй прависемпе ĕçĕсене татах анлăлатнине пĕлтерет.

Союзлă республикăна туса хунă кашни совет халăхĕ **хăйĕн çĕршывĕнче чăнчăн хуçа пулса тăрать.** Çав вăхăтрах союзлă республика хăватлă союзлă пĕр государствăн членĕ пулса тăрать. Кашни совет халăхĕ Совет Союзĕнчен политика, хуçалăх тата культура тĕлĕшĕнчен пур тĕрлĕ пулăшу илсе тăрать, ăна Совет Союзĕ тулашри тăшмансенчен хӳтĕлесе тăрать.

СССР Конституцийĕ Совет Союзне Союзлă республикăсен суверреннăй прависене хӳтĕлеме хушать. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕ хăйĕн çак тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕ, малашне те вăл ăна тӳрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пырĕ.

(Юлашки пулать).

Смоленск хулипе облаçĕнче тискер ĕçсем тунă фашистла нимĕç захватчикĕсем пирки йышăннă приговора пурнăçа кĕртни

СМОЛЕНСК, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Округри Çар трибуналĕ фашистла нимĕç ирсĕрĕсене — Модиш Рудольфа, Кирштфельд Роберта, Вайс Виллие, Гаудиян Курта, Генчке Фрица, Мюллер Эриха, Краузе Виллие Смоленск хулипе облаçĕнче мирлĕ совет гражданĕсене, вăл шутра хĕрарăмсене, ачасене тата стариксене тискеррĕн вĕлернĕшĕн çакса вĕлермелле тунă. Вара декабрĕн 20-мĕшĕнче кăнтăрла 12 сехетре Смоленскра хула площадĕнче вĕсене пурне те çакса вĕлернĕ.

Çар трибуналĕн приговорне пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра хула площадĕнче Смоленск хулинчи ĕççыннисемпе çывăхри районсенчен килнĕ колхозниксем 50 пин çынна яхăн пулнă, çавăн пекех Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсем тата совет пичечĕн представителĕсем пулнă.

Округри Çар трибуналĕн приговорне вуласа панине тата ăна пурнăçа кĕртнине площадре пухăннă çынсем пурте пĕр кăмăлпа ырланă.

Финляндири вăрçă преступникĕсене суд туни

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 17-мĕшĕнче Финляндири вăрçă преступникĕсен судĕнче айăпланакан Таннер хăйне хӳтĕлекен сăмах тухса каланă. Ирхи лару унăн сăмахне итленипех пĕтнĕ, каçхи ларура та çаплах Таннер сăмахне итленĕ. Таннер Финляндие гитлерла Германи майлă пулса агрессиллĕ вăрçа хутшăнтарас тĕлĕшпе хăй тунă ĕçсене пур майпа та пĕчĕкклетсе кăтартма тăрăшнă. Вăл çапла каланă: Финляндин генеральнăй штабĕ, главнокомандующин авторитечĕпе усă курса, пĕтĕм вăрçă ĕçне хăй тĕллĕнех ертсе пынă, тенĕ. Анчах та Таннерăн ирĕксĕрех çакна йышăнма тивнĕ: социал-демократсен партийĕн пуçĕнче тăракан çынсем вăрçă ĕçне активлăн хутшăннă, çав партин ертсе пыракан органĕсем тытса пынă çулĕйĕр Таннера та вăрçă ĕçне хутшăнса пымалла тунă.

Таннер каласа пĕтерсен, суд канашлама тухса кайнă. Канашлу пĕр сехет ытла пынă. Вара суд председателĕ судăн каçхи ларăвĕ пĕтни çинчен пĕлтернĕ.

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири вăрçă преступникĕсен ĕçне пăхакан судăн декабрĕн 20-мĕшĕнче пулса иртнĕ ларăвĕнче общество енчен айăплакан юстици канцлерĕ Тарьянне суда айăпланакансене çакăн пек ыйту пама сĕннĕ: Германи Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласа ярассине кĕтнĕ май Финляндире мĕнле ĕçсем тума тытăннă? Вара суд председателĕ Оскар Меллер айăпланакансенчен çавăн çинчен ыйтнă. Анчах та айăпланакансем çав ыйтăва хирĕç ответ парассинчен пăраннă.

Çак ыйту пирки пулса иртнĕ пренисем хыççăн общество енчен айăплакан Тарьянне тухса каланă. Вăл çапла каланă: суд раштав праçникĕ вăхăтĕнче перерыв тума шутлать, çавăн пекех мана хама та, общественность енĕпе айăплакан пулса ĕçленĕ май, айăпланакансен суд аллине панă документĕсемпе паллашмашкăн перерыв туни кирлĕ. Çакăн хыççăн Тарьянне çапла каланă: çакăнпа пĕр вăхăтрах эпĕ акă мĕн ыйтатăп: арестленĕ айăпланакансем малашне те хальхи пекех тĕрмере ларччăр. Халĕ ирĕкре çӳрекен айăпланакансене те эпĕ арестлеме ыйтатăп. Çак ыйтăва эпĕ перемири çинчен тунă килĕшӳвĕн 13-мĕш статьи тăрăх лартатăп. Çав статья тăрăх, Финлянди вăрçă преступникĕсене судпа айăплама пулнă çеç мар, вăл вăрçă преступникĕсене тытса чарма та пулнă. Çав асăннă «килĕшӳсĕр» те суд ку тĕлĕшпе хăйĕн решенине йышăнма ирĕклĕ.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Тарьянне суда çапла каланă: айăпланакан Таннер айăпласа çырнă актра кăтартнă 5 пункт тăрăх наказани тӳсмелле, вăл айăпласа çырнă актăн 2-мĕш пунктĕнче кăтартнă ĕçсемшĕн пуринчен те ытларах ответлă пулса тăрать.

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Общество енчен айăплакан Тарьянне малтанлăха хупса усрасран хăтарнă 4 айăпланакана арестлеме ыйтнă пирки пулнă суд канашлăвĕ пĕр сехет те 30 минута пынă. Вара суд çапла пĕлтернĕ: ку ыйту пирки суд хăйĕн решенине декабрĕн 21-мĕшĕнче йышăнать, тенĕ. Унтан суд председателĕ çапла каланă: Рюти, Рангель, Линкомиес тата Рамсай кĕнĕрне тĕрмене каяççĕ, ытти айăпланакансем — Таннер, Кивимяки, Рейнкка тата Кукконен суд ларăвне вăхăтра çитмелле, унсăрăн вĕсене те арестлеççĕ, тенĕ. Декабрĕн 20-мĕшĕнчи лару çакăнпа пĕтнĕ.

Луи Сайян В. М. Молотов юлташа, Бевина тата Бирнса янă çыру

БРАЗЗАВИЛЬ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Браззавильти радио пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн секретарĕ Луи Сайян В. М. Молотова, Бевина тата Бирнса çыру янă. Çав çырура вăл союзлă державăсене Франко Испанийĕпе çыхăну тытма пăрахма чĕнет. Çырура çапла каланă:

«Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен октябрь уйăхĕнче Парижра пулнă конференцийĕ йышăннă решение шута илсе, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕ демократиллĕ правительствăсенчен Франко правительствипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахма ыйтать, çакна вăл хăйĕн 70 миллион членĕ ячĕпе ыйтать. Франко тĕнĕл держависен политикине хутшăнни, унтан вара вăрçа Гитлер майлă пулса хутшăнни, Испанире профсоюзсемпе граждансем валли нимĕнле ирĕклĕхсем те çукки—çаксем ĕнтĕ Франкона вăрçă пуçланăшăн айăплă çынсемпе тата халăхсен демократиллĕ прависене пăсакансемпе юнашар лартаççĕ. Мускава пухăннă ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрĕ Франко правительствине вырăнтан тухма хушакан сăмахсем каласассăн, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем çакна питĕ савăнса ырланă пулĕччĕç.

ЭАМ Центральный Комитечĕ В. М. Молотова, Бирнса тата Бевина янă телеграмма

АФИНЫ, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). ЭАМ-ăн (Греци халăхĕн ирĕклĕх фрончĕн) Центральный Комитечĕ Мускава В. М. Молотов, Бевин тата Бирнс патне телеграмма янă. Вăл çав телеграммăра ют çĕршыв ĕçĕсен виçĕ министрне Грецири лару-тăру çинчен асăрхаттарать, çав лару-тăру «Атлантика хартийĕн принципĕсене тата Тегеранрипе Ялтăри конференцисен решенийĕсене хирĕç пырать», тет. Телеграммăра çапла каланă: монархистсен хĕçпăшалланнă фашистла бандисем пĕр чăрмавсăр террор туса çӳреççĕ, çар, полици, жандармери тата пĕтĕм государство аппаратĕ демократие хирĕç пыракан фашистла тата сутăнчăкла çынсен аллинчех тăраççĕ, тенĕ.

ЭАМ Центральный Комитечĕ тăшмана хирĕç кĕрешнĕ çынсене хĕсĕрлени çинчен калать, 9 уйăх хушшинче 1000 демократа ытла вĕлернĕ, тет.

Юлашки событисем çакна питĕ лайăх кăтартса пачĕç, тенĕ телеграммăра: Крымри конференци кăтартнă тăрăх ЭАМ представителĕсене хутшăнтарса тунă правительство кăна çĕршыва йĕркене кĕртме, ирĕклĕ суйлав туса ирттерме тата экономикăна ура çине тăратма пултарать. «Греци ĕçне ют çĕршыв хутшăнни Грецие демократиллĕ майпа аталантарса пыма кансĕрлет», тенĕ телеграммăра, «Грецире ют çĕршывсен çарĕсем пурăнни ытларах та ытларах кăмăла кайман япала пулса тăрать». Юлашкинчен ЭАМ Центральный Комитечĕ Грецире демократиллĕ условисем тума пулăшма чĕнет.

Грецири лару-тăру

АФИНПА ПИРЕЙ ХУЛИСЕНЧЕ ФАШИСТСЕН ТЕРРОРĔ АЛХАСНИ

АФИНЫ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки кунсенче Афинпа Пирей хулисенче фашистсен террорĕ татах та алхасса кайни паллă пулнă. Хитоссен бандисем (хитос тесе монархистсен «Х» ятлă фашистла организацин членĕсене калаççĕ), автоматсемпе тата гранатăсемпе хĕçпăшалланнăскерсем, автомашинăсем çине ларса, рабочисем пурăнакан районсем тăрăх уççăнах çӳренĕ, вĕсем халăха хупăрласа илсе ухтарнă, хĕненĕ, рабочисене тыта-тыта хупнă, сулахай организацисен çурчĕсене çĕмĕрнĕ. Вырăнти халăх чулсемпе, патаксемпе персе хирĕç тăма пуçласан, кашни хутĕнчех хитоссене пулăшма полици пынă. Темиçе хутчен те хитоссем гранатăсемпе пенĕ. Темиçе çынна амантнă, çĕр çынна ытла хĕнесе тăкнă.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Пирей хулинче хитоссем çамрăксен патриотла организацийĕн (ЭПОН-ăн) бюровĕ вырнаçса тăракан çуртăн пĕр пайне динамит хурса ишсе антарнă. Çак ĕç пирки ЭПОН представителĕсем виçĕ çын полици управленине кайса протест панă, анчах та вĕсене виççĕшне те тытса хупнă. Афины хулинче хитоссем ЭПОН клубĕн çуртне икĕ граната пăрахнă.

Индо-Китайри çапăçусем

ДЕЛИ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Дели хулинчи радио çапла пĕлтерет: Индо-Китайра Далаг хулинчен 60 километр сурçĕртерехре Франци çарĕсемпе вырăнти аннамитсен отрячĕсем хушшинче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Франци командованийĕ ыйтнипе çав районă акăлчансем «Спитфайер» йышши виçĕ самолет янă. Çав самолетсем аннамитсен отрячĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Нимĕçсен вăрçă пуçланăшăн айăплă тĕп преступникĕсене Нюрнбергра суд туни

ДЕКАБРĔН 19-мĕшĕнчи КАÇХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Америка айăплаканĕсен представителĕ Фар майор паян трибунала СС организацийĕн преступникла ĕçĕсене кăтартакан документсем панă.

Гитлер партийĕ каварлашăвăн чĕри пулнă, СС организацийĕ — гитлеризмăн тĕшшĕ пулнă,—тет айăплакан.

Айăплакан, СС-ăн преступникла ĕçĕсем çинчен калама пуçласа, чи малтан эсэсовецсен полици отрячĕсем Хĕвелтухăçĕнчи территорисенчи халăха пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыни çинчен калать.

Мĕнпур преступникла организацисем—хăрушсăрлăх полицийĕ, хăрушсăрлăх служби, СС-ăн хĕçпăшаллă вăйĕсем тата СС отрячĕсем—пĕр-пĕрипе таччăн çыхăнса кайнă, тет Фар майор. Çав организацисене Гиммлер тата унăн провинцисемпе облаçсенчи çыннисем ертсе пынă. Вĕсен пурин те пĕр тĕллев пулнă, вĕсен тĕллевĕ—гитлерла режима хирĕç пыракан шухăш-кăмăлсене пусарса тата гитлерла каварлашуçăсене политика енчен хирĕç пыракан çынсене вĕлерсе пырса, гитлерла режима сыхласа хăварасси пулнă.

Айăплакан çакна кăтартса парать: гитлерла каварлашуçăсем çав тара тытнă бандитсемпе террористсен гвардине суйласа илесси çине питĕ тимлĕн пăхнă.

Гиммлер, хăй аллинчи çынсене хăйне пĕр сăмахсăрах пăхăнса тăма хушса, çапла каланă: эпĕ СС-ран «çурçĕрти таса юн орденĕ» туса хурас тетĕп, çав орден Германие малтан Европăра, унтан пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăма пулăшĕ, тенĕ.

Трибуналăн каçхи ларăвĕ хупăнас умĕн Фар майор çапла каланă: ыран эпĕ еврейсене хĕсĕрлес тата вĕлерсе пĕтерес ĕçре, вăрçă пуçлама хатĕрленес ĕçре тата этемлĕхе хирĕç пыракан преступленисем тăвас ĕçре, çавăн пекех тата нимĕçсем оккупациленĕ территорисене германизацилес ĕçре СС мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен каласа парăп, тенĕ.

ДЕКАБРĔН 20-мĕшĕнчи ИРХИ ЛАРУ

НЮРНБЕРГ, декабрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 20-мĕшĕнчи ирхи ларура Америка айăплаканĕсен представителĕ Уоррен Фар малалла каланă. Вăл гитлеровецсен СС организацийĕ преступникла ĕçсем тунине кăтартакан документсене вуласа панă. Çав организаци мĕнлескер пулнине тата унăн тĕллевĕсене вăл концентрациллĕ лагерьсенче тунă ĕçсем пуринчен те лайăхрах кăтартса параççĕ, тет айăплакан. СС органĕсем тытса илнĕ çĕршывсене чуралантарас тата ĕç вăйне ухутарпи пек тытса çӳрес ĕçе активлăн хутшăннă.

Айăплакан малалла СС бригаденфюрерĕн—СС çарĕсен генерал-майорĕн Глюксăн çырăвне вуласа парать. Вăл çырура çапла каланă: хупнă чирлĕ çынсене пурне те вĕлерес пулать, ыттисене, ĕçлеме кăшт та пулин пултараканнисене, концентрациллĕ лагерьсене ĕçлеме ярас пулать, тенĕ. Лагерьте çав çынсем ĕçленĕ условисем—вĕсене вĕлермелли условисем пулнă, тет айăплакан.

Айăплакан малалла СС органĕсем концентрациллĕ лагерьсене хупнă çынсем çинче тĕрлĕ опытсем туни çинчен калать. 1941 çулхи майăн 15-мĕшĕнче эсэсовецсен врачĕ Рашер Гиммлер патне çыру янă. Çав çырура вăл сывлăшра нумай çӳлте вĕçнĕ чухне опытсем тумашкăн лагерьсене хупнă çынсемпе усă курма сĕннĕ. Вăл çапла çырнă: хăйсем çинче çавăн пек опытсем тутарма килĕшекен çынсене тупма çук. Вăл опытсене упăтесем çинче те тума çук. Çавăнпа та сывлăш-çар вăйĕсен представителĕсем çав ыйтусене «çынсем çинче опытсем туса çеç» татса пама шутлаççĕ, тенĕ.

1941 çулхи майăн 22-мĕшĕнче Рашера çавăн пек тума ирĕк панă.

Рашер 1942 çулхи май уйăхĕнче çавăн пек опытсем тунă та вара.

Генерал-фельдмаршал Мильх çав опытсене тума пулăшнăшăн Гиммлера тата СС чиновникĕсене Геринг ячĕпе тав тунă.

Сывлăшра питĕ çӳлте вĕçес тĕлĕшпе хăйĕн опычĕсене туса пĕтерсен, Рашер доктор çынсене шăнтса лартас тата шăнтса лартнă хыççăн вĕсене çĕнĕрен чĕртес тĕлĕшпе опытсем тума пуçланă. Çав опытсене 1942 çулхи августăн 17-мĕшĕнче Дахаура тума пуçланă. Айăплакан малалла Рашер доктор çырнă отчетран хăшпĕр вырăнсене вуласа парать. Отчетра çапла каланă: çынсене летчик формине тăхăнтарса, çуллахи е хĕллехи комбинезон тата çуллахи шлем тăхăнтарса, шыва кĕртсе лартнă. Шыв температури 2,5 градусран пуçласа 12 градус таран сивĕ пулнă. Хăш опытсене тунă вăхăтра вĕсен пуçне те шыва путарнă... Сивĕ 28 градуса çитсен, вăл çынсем яланах вилетчĕç, чĕртме тăрăшсан та чĕрĕлмесчĕç, тенĕ.

Айăплакан малалла 1942 çулхи октябрĕн 16-мĕшĕнче Гиммлерăн СС генерал-лейтенантне Поле çырнă çырăвне вуласа парать. Çав çырура Гиммлер çапла каланă: шăнтса лартнă çынсене ăшăтас тĕлĕшпе тунă опытсем мана кăмăла кайрĕç. Епĕ вăл опытсене Дахаура куртăм. «Эпĕ çавăн пек опытсем тума юрăхлă хĕрарăмсене суйласа илме хушрăм», тенĕ. Рашер опычĕсем Гиммлера питĕ савăнтарнă. Гиммлер вара Мильх генерал-фельдмаршал патне çырнă çырура çапла каланă: опыт валли çынсем тупса парас ĕçе эпĕ хам çине илетĕп, тенĕ. Вăл çав опытсене аслăлатма тата опытсен результачĕсем çинчен Мильха пĕлтерме сăмах панă, çавăнпа пĕрлех Рашера хăй патне яма ыйтнă.

Çавăн пек тискер опытсемпе пĕрлех эсэсовецсен врачĕсем хупнă çынсене наркăмăшлă пульăсемпе вĕлерес тата наркăмăш ярас тĕлĕшпе опытсем тунă. Çав опытсем çинчен вĕсем тĕплĕн çыра-çыра панă. Айăплакан çапла калать: Германин финанс министерстви эсэсовецсен çав опычĕсем валли укçа-тенкĕ парса тăнă, тет.

Çакăн хыççăн айăплакан СС органĕсем еврейсене хирĕç преступникла ĕçсем тунине кăтартакан йышлă документсене вуласа парать. СС организацийĕ,—тет айăплакан,—агрессиллĕ вăрçă пуçлама хатĕрленес тата ăна пуçлас ĕçе активлăн хутшăннă. Çав вăрçа СС каварлашуçисем шухăшласа хунă тăрăх пуçласа янă. СС организацийĕ вăл Версальти договора пăсса тунă организаци пулнă. Вăл Германи тулашĕнче 5-мĕш колонна хатĕрленĕ, Австри канцлерне Дольфуса тата ытти çынсене вĕлерес ĕçе хутшăннă. Эсэсовецсем, Совет Союзĕнчи партизансемпе кĕрешетпĕр тесе, гражданла халăха вĕлерсе çӳренĕ.

Айăплакан малалла СС полицийĕ хăйне уйрăм операци туни çинчен Белоруссин генеральнăй комиссарĕ Розенберга çырса янă отчета вуласа парать. Çав операцие «котбус» тесе ят панă. Партизансемпе кĕрешме тунă çав операци вăхăтĕнче, отчетра каланă тăрăх, 5.000 çынна вĕлернĕ. Документсем кăтартнă тăрăх, çав вĕлернĕ çынсем хушшинче хĕрарăмсемпе ачасем те нумай пулнă.

Айăплакан трибунал протоколĕсем çумне союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн отчетне хушса хурать. Çав отчетра нимĕçсем союзниксен çарĕсене пере-пере вĕлерни çинчен каланă. Союзниксен çарĕсене эсэсовецсен 12-мĕш танковăй дивизийĕнчи салтакĕсем 1944 çулхи июнĕн 7-мĕшĕпе 21-мĕшĕ хушшинче вĕлернĕ.

Трибуналăн декабрĕн 20-мĕшĕнчи ирхи ларăвĕ çакăнпа хупăннă.

Союзниксен Австрири Совечĕн ларăвĕ çинчен пĕлтерни

1945 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче Союзниксен Австрири Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларăва Совет Союзĕн Маршалĕ Конев председатель пулса ертсе пынă. Конев Маршал тата ытти главнокомандующисем—генерал Кларк, генерал-лейтенант сэр Маккрири тата корпус генералĕ Бетуар — хăйсен политика советникĕсемпе тата заместителĕсемпе пĕрле Австрин пулас правительствин составĕн списокне пăхса тухнă. Списока Фигль инженер тăратнă. Ларура списока ырланă, çапах та хăшпĕр улшăнусем кĕртнĕ, вара главнокомандующисем, пурте пĕр кăмăллă пулса, çав списока ырламашкăн хăйсен правительствисене тăратма пулнă.

Союзниксен Совечĕ Австри правительствин Конституци законне тата ытти чылай законсене ырланă.

Главнокомандующисем çак ларура решени йышăннă. Çав решени тăрăх, тыткăна лекнĕ çар çыннисене те, Австрири пур гражданла çынсене те 1946 çулхи январĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа Германин çар формине тăхăнса çӳреме çирĕппĕн чарнă. Союзниксен Совечĕ Австри правительствине çак решенипе килĕштерсе постановленисем кăларма хушнă.

Çавăн пекех тата ларура Пĕрлешнĕ нацисен пурлăхне шута илсе сыхласси çинчен решени йышăннă.

Иртнĕ суйлавсенче национал-социалистсен партийĕнче тăнă çынсем суйлава хутшăннă пулнă, çавăншăн вĕсем тивĕçлĕ наказани тӳсмелле. Çав тĕлĕшпе вĕсен заявленийĕсене тĕрĕслес тĕлĕшпе йышăннă мероприятисене çирĕплетсе панă.

ВЕНА, декабрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС).

МУСКАВРИ ЦДКА КОМАНДИ ЮГОСЛАВИРИ «ХАЙДУК» КОМАНДИПЕ ФУТБОЛЛА ВЫЛЯНĂ

БЕЛГРАД, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Декабрĕн 17-мĕшĕнче Сплит хулинче Мускаври ЦДКА командипе Югославири «Хайдук» команди хушшинче футбол матчĕ пулса иртнĕ.

Матчра 12 пин çын пулнă.

«Хайдук» команди Югославири чи вăйлă командăсенчен пĕри пулса тăрать. Матчра çав тери сивĕч тапхăрсем нумай пула-пула иртнĕ. ЦДКА команди «Хайдук» команди хапхине 2 пӳске çапса кĕртнĕ. Югослави футболисчĕсем ЦДКА командин хапхине пĕр пӳске те çапса кĕртеймен. Çапла матч ЦДКА команди футболисчĕсем çĕнтернипе пĕтнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Болгарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99, ялхуçалăх пайĕн—3-09, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00478 ... ЧАССР. Тираж 16.000 экз.